Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

83 (8246) № * Шăмат кун, 2014 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 25-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Муркашсем йывăрлăха çĕнтерчĕç



Муркаш районĕ пăрлă çумăра пула уйрăмах пысăк инкек тӳсрĕ. Малтанхи кунсенчех районти 177 ялтан 175-шĕ электроэнергисĕр тăрса юлчĕ, Муркашпа Мăн Сĕнтĕр ялĕсемсĕр пуçне. Паллах ку ялсенче те çутăсăр ларнă сехетсем пулчĕç.

Апла пулин те Муркаш районĕ инкекре пĕччен юлмарĕ.

Вырăнти влаç органĕсем те лару-тăрăва çийĕнчех алла илчĕç. Тивĕçлĕ тытăмсен ĕçне йĕркелерĕç.

ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çынсене инкекре пăрахмастпăр тени ĕçпе çирĕпленчĕ.

Çак кăткăс кунсенче районта электроэнерги парассипе, çыхăну йĕркелессипе, ăшăпа тата шывпа тивĕçтерессипе çĕршер çын ĕçлерĕ. Саратов, Самара, Киров, Чул хула, Оренбург, Пенза облаçĕсенчен, Мордва Республикинчен, хамăр республикăри тĕрлĕ районсенчен килнĕ специалистсем ир пуçласа каçчен инкекпе кĕрешрĕç. Вĕсене ĕçлеме тата пурăнма мĕн пур условисем туса панă.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăра чрезвычайлă лару-тăру пулнине пĕлтернĕренпех ĕç-пуçа çирĕп контрольлесе тăчĕ. Иртнĕ юн кун вăл пирĕн районта пулчĕ.

Михаил Игнатьев ответлă çынсемпе Рыккакасси ялне çитнĕ чухне тул çутăлса та ĕлкĕрейменччĕ. Район пуçлăхĕ Игорь Николаев тата район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев та унтах. Саратов облаçĕнчен килнĕ специалистсем хуçăлса ӳкнĕ электричество юпине улăштарассипе тимлетчĕç.

Республика Пуçлăхĕ тӳрех вĕсене ĕçлеме, пурăнма майсем туса панипе интересленчĕ. Дмитрий Захарченко мастер хăйсене аван йышăннине, пурăнма вырнаçтарнине, вĕри апатпа тивĕçтернине пĕлтерчĕ. Кунти юсав ĕçне кăнтăрлана вĕçлессине палăртрĕ. (Малараx калатăп, энергетиксем хăйсен сăмахне тытнă).

Михаил Игнатьев ял çыннисем çак кунсенче епле пурăннине ыйтса пĕлчĕ. Çăлта шыв пуррине тĕрĕслесе ăсса пăхрĕ.



Ял çыннисем те çутă çук тесе алă усса ларман. Венера Акимова депутат, ял старости Татьяна Кондратьева каланă тăрăх ӳкнĕ йывăçсене каснă, пралуксене пăртан тасатнă. "Чăвашэнерго" специалисчĕсене вара ят лекрĕ. Кунти Çĕнĕ урамри йывăçран тунă çвет юписене икĕ çул каялла çеç лартнă иккен. Вĕсене ун чухнех бетон юпасемпе çирĕплетнĕ пулсан кусем çĕрĕшес çукки куçкĕрет.

Унтан Михаил Игнатьев Москакасси ялне çитрĕ. Кунта Киров облаçĕнчен, Куславккапа Çĕнĕ Шупашкартан килнĕ тата районти энергетиксем тимлетчĕç. Вĕсем шыв башни патне каякан электролиние юсатчĕç. Тăрăшса ĕçлени тӳрех куç умне тухрĕ. Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов лару-тăрăва контрольлени курăнчĕ.

Хыççăн Михаил Игнатьев Муркаш район администрацийĕнче муниципалитет тытăмĕсен ертӳçисемпе видеоконференци ирттерчĕ.

Калаçу аварисене пĕтерессипе тата çулсемпе тротуарсене юртан тасатасси пирки пулчĕ.

Республика пуçлăхĕ энергетиксем 7 сехетрен пуçласа, юр çунипе çил вĕçтернине пăхмасăр, пралуксем карнине, çвет юписем улăштарнине палăртрĕ. Вĕсене апатлантарнă, канма майсем туса панă. Энергетиксем вара çине тăрса ĕçлеççĕ, палăртнине пурнăçлаççĕ, терĕ вăл.

Кун пеккине, пĕтĕм район электричествăсăр юлнине, халиччен курман. Инкек виçи чăнах та пысăк пулчĕ. Апла пулин те Муркашсем йывăрлăха çĕнтерчĕç. Вĕсем инкекре пĕччен юлмарĕç. Муркашсене республика, çĕр-шыв пулăшрĕ. Ку та питĕ пĕлтерĕшлĕ пулчĕ.

**А. ТИХОНОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: ĕçлĕ çул çӳрев саманчĕсем.**

**Н. ГРИГОРЬЕВА сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Чрезвычайлă лару-тăрăва пăрахăçланă

**Республикăра.** Октябрĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ регион шайĕнчи чрезвычайлă лару-тăрăва пăрахăçласси пирки калакан хушăва алă пуснă. Çанталăкăн япăх условийĕсене пула ăна кăçалхи октябрĕн 17-мĕшĕнче туса хунăччĕ.

Октябрĕн 24-мĕшĕнче 12 сехет тĕлне Чăваш Республикинче çынсене пурăнма кирлĕ пур системăна та юсаса пĕтерсе хута янă, пур яла та электроэнерги парса тăрассине йĕркеленĕ.

Отчетлă тапхăрта электроэнерги парса тăрассине йĕркелессипе халăх пурăнакан 515 вырăнта юсав ĕçĕсем пурнăçланă, вĕсенче 100964 çын пурăнать. 94 шкула, 40 ача садне тата социаллă сферăн 7 объектне ăшă тата электроэнерги пырса тăма тытăннă.

* * *

**Районта.** Район администрацийĕ октябрĕн 24 мĕшĕнче район территорийĕнче чрезвычайлă лару-тăрăва пăрахăçласси пирки калакан 1071 № йышăну кăларнă.

Район территорийĕнчи пур яла та электроэнерги парса тăрассине йĕркелессипе аварипе юсав ĕçĕсене вĕçленĕ май октябрĕн 24-мĕшĕнче 13 сехетрен тытăнса район территорийĕнче чрезвычайлă лару-тăрăва пăрахăçланă.

Район администрацийĕн 2014 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнчи район территорийĕнче чрезвычайлă лару-тăру туса хурасси пирки калакан 1015 № йышăнăвĕ вăйне çухатнă шутланать.

## Çут çанталăк инкекне пурте пĕрле сирсе ятăмăр

### Тавах сире пурне те çакăншăн

Октябрĕн 17-мĕшĕнче çунă пăрлă çумăр республикăри чылай района сиен кӳчĕ. Пуринчен ытла вара пирĕн районта пурăнакансене шар кăтартрĕ вăл. Районти 177 ялтан 175-шĕ электроэнергисĕр тăрса юлчĕ. Çут çанталăк кӳнĕ инкеке сирме пирĕн республикăна ытти регионсенчен те энергетиксем пулăшма килчĕç. Çавăнпа та республика Пуçлăхне Михаил Васильевич Игнатьева, республика Правительствине, инкеке сирме хутшăннă мĕн пур служба ертӳçине Муркаш районĕнче пурăнакансене çут çанталăк кӳнĕ инкеке сирсе яма пулăшнăшăн, пирĕн района кирлĕ техника, специалистсене çителĕклĕ таран янăшăн Муркаш районĕнче пурăнакансен ячĕпе чун-чĕререн тав тăватăп.

Пирĕн районта Самара, Саратов, Чул хула, Киров, Пенза облаçĕсемпе Мордва Республикинчен килнĕ энергетиксем ĕçлерĕç. Çавăн пекех республикăри Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар, Улатăрпа Вăрнартан, ытти районсенчен те бригадăсем ир пуçласа мĕн сĕм çĕрлеччченех ялсене, социаллă объектсене электроçутă парассипе тимлерĕç. Пысăк тав вĕсене тата çав регионсене ертсе пыракансене.

Юсав ĕçĕсене йĕркелесе ертсе пынăшăн "МРСК Волги" акционерсен уçă обществин директорĕн çумне – "Чувашэнерго" филиалĕн ертӳçине Дмитрий Геннадьевич Иванова уйрăммăн тав тăватăп.

Районти "Моргаушское" ЖКХ муниципаллă унитарлă предприятийĕн электрикĕсем те социаллă объектсемпе ялсене çутă, ăшă парассишĕн тăрăшрĕç. Пысăк тав вĕсене хăйсен тивĕçне чун-чĕре хушнă пек пурнăçланăшăн.

Çавăн пекех республикăри уйрăм предпринимательсен бригадисем те ыр сăмаха тивĕç.

Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен обществăлла апатлану точкисенче ĕçлекенсем 7 талăка пынă чрезвычайлă лару-тăрăва сирсе ярас тесе тимлекен специалистсене вĕри апатпа вăхăтра тивĕçтерчĕç. Тем пысăкăш тав вĕсене те.

Ăнсăртран сиксе тухнă çут çанталăк инкекне пăхмасăр, районта лару-тăру лăпкă пулчĕ. Район территорийĕнчи федераци, республика шайĕнчи органсем те район администрацийĕпе тачă çыхăнса ĕçлерĕç. Çавăнпа та манăн уйрăммăнах район прокурорне Сергей Владимирович Павлова, РФ Шалти ĕçсен министерствин пирĕн районти пайĕн ертӳçине Евгений Иванович Плечова, Чăваш Республикинчи çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсемпе ĕçлекен пайĕн ертӳçине Александр Алексеевич Кочурова тата вĕсем ертсе пыракан коллективсене тав сăмахĕ калас килет.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

**Çырăнтару – 2015**

## Эсир хаçат çырăннă-и?

**Хаклă вулаканăм! "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата 2015 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтараççĕ. Апла пулсан почтальонсемпе тĕл пулма васкăр. "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 347 тенкĕ те 28 пус.**

**"Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата çитес çулхи 6 уйăх валли çырăнакансене стена çине çакмалли 2015 çулхи тĕслĕ календарь парнелетпĕр.**

**Хаçат редакцийĕ.**

# Çĕнĕ çул: пахалăх тĕп вырăнта

Строительство







"Ханты-Мансийскдорстрой" ОАО пысăк реконструкципе юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ хыççăн октябрĕн 23-мĕшĕнче савăнăçлă лару-тăрура М-7 "Волга" Мускав – Владимир – Чул хула – Хусан – Ĕпхӳ автомобиль çулĕн Муркаш районĕн территорийĕнче вырнаçнă 613+000 – 623+500 километр лаптăкне хута ячĕç. Çакă республикăшăн, пирĕн районшăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни каласарах паллă. Савăнпах ĕнтĕ ку церемоние Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Федераци çул-йĕр агентствин ертӳçи Роман Старовойт хутшăнни ăнсăртран мар.

Михаил Васильевичпа Роман Владимировича федераци трассин Москакасси тĕлĕнчи çул юпленĕвĕнче Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, район пуçлăхĕ Игорь Николаев кĕтсе илчĕç. Çулăн çĕнĕ лаптăкне хута янă çĕре çавăн пекех Чăваш Республикин транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министрĕ Владимир Филиппов, "Волга" Упрдор ФКУ пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Сергей Мартынов, "Автобан" çул-йĕрпе строительство компанийĕ" ОАО генеральнăй директорĕ Алексей Андреев, "Ханты-Мансийскдорстрой" ОАО исполнительнăй директорĕ Николай Балашов, 905-мĕш номерлĕ строительство управленийĕн филиалĕн директорĕ Виктор Шендрик тата ытти ответлă ĕçчен, строительсен пысăк ушкăнĕ хутшăнчĕ.

Ятарласа хатĕрленĕ сцена çине улăххичен Михаил Игнатьев, Роман Старовойт тата ыттисем "Ханты-Мансийскдорстрой" ОАО, вăл пурнăçлакан калăпăшлă ĕçсем пирки каласа паракан стендсемпе паллашрĕç, çĕнĕ çул пирки фильм та пăхма май пулчĕ.

10,5 километр тăршшĕ çул çинче строительсем реконструкципе юсав ĕçĕсене вара чăннипех сахал мар пурнăçланă. Çак ĕçсене пĕтĕмпе субподрядлă 9 организаци явăçтарнă. Москакасси тĕлĕнче кĕперлĕ пĕр çул юпленĕвĕ тунă, çуран çӳрекенсем валли çул урлă çĕр çийĕн каçмалли вырăн иккĕ туса панă, хăйăр бази йĕркеленĕ, пăрахсем хурса шыв юхса тухмалли сооруженисем 29 тунă, примыканисемпе çул каçăмĕсем 26, çул урлă каçмалли вырăнсемлĕ 15 автопавильон, 24 пин метр барьер хӳми çĕре кĕртнĕ, 17 километр тăршшĕ çула электричествăпа çутатса тăрассине йĕркеленĕ, çул-йĕр паллисене 13 километр тунă. Çĕр ĕçĕсене вара пĕтĕмĕшле 1350000 кубла метр чухлĕ пурнăçланă. Çул хăйĕн пахалăх кăтартăвĕпе 1Б категорие тивĕçтерет.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăйĕн сăмахĕнче çавна палăртрĕ. Юлашки вăхăтра федераци трассисене реконструкцилеме тата модернизацилеме миллиардшар тенкĕ укçа уйăраççĕ. Республика та ку енĕпе юлса пыма шутламасть. Регион тата муниципалитет çулĕсене çĕнетессипе çуллен сахал мар ĕç пурнăçлаççĕ. Çул-йĕр хуçалăхĕ паян хăйĕн тивĕçĕсене япăх мар йĕркелет. Çакă чи малтанах çул-йĕр хăрушсăрлăхĕпе, водительсемпе пассажирсене хăтлă условисем туса парассипе çыхăннă. Кунсăр пуçне йĕркеллĕ çулсем пулманни экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕ çине те витĕм кӳретех. Михаил Васильевич пĕтĕм чăваш халăхĕ ячĕпе çĕр-шыв ертӳçисене, Федерацин Транспорт министерствине, Федерацин çул-йĕр агентствине, "Автобан" çул-йĕрпе строительство компанийĕ" ОАО-на, "Ханты-Мансийскдорстрой" ОАО-на, субподрядчиксене, çак çул лаптăкне хута ярассишĕн тăрăшнă мĕн пур строителе пысăк тав сăмахĕ каларĕ.

Федераци çул-йĕр агентствин ертӳçи Роман Старовойт подряд организацийĕн ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Асăннă организаци Чăваш Республикин территорийĕнче пĕрремĕш объект кăна хута ямасть ĕнтĕ. Унччен М-7 "Волга" çулăн 564 – 579 километр лаптăкĕнче реконструкци ĕçĕсем пурнăçланă. Мордови Республикинче Саранск хулине пырса кĕнĕ çĕрти трассăна та асăннă организаци строительсем реконструкциленĕ.

М-7 "Волга" Мускав – Владимир – Чул хула – Хусан – Ĕпхӳ автомобиль çулĕн Муркаш районĕн территорийĕнче вырнаçнă 613+000 – 623+500 километр лаптăкне тĕрĕссипе иртнĕ çулах хута яма май пулнă. Шел, укçа-тенкĕ çитеймен таран уйăрайман. Апла пулин те ăна строительсем палăртнинчен пĕр çултапăк маларах туса пĕтерчĕç. Ку вăл çакăнпа та çыхăннă. Раççей çул-йĕр отраслĕн историйĕнче пĕрремĕш хут 2014 çулта федераци трассисене тытса тăма тата юсама укçатенкĕне çĕр процентлĕ уйăрнă. Çапла вара 2018 çул вĕçленнĕ тĕле пур федераци çулне те норматива пăхнă шая çитерме май пулĕ.

"Пире Чăваш Республикинче ĕçлеме çăмăлрах. Ялан эпир хамăра ăнланнине, пулăшма тăрăшнине туйса тăратпăр", – терĕ вăл Чăваш Ен Пуçлăхĕпе республика Правительствипе пĕрлехи ĕçшĕн тав тунă май.

Иртнĕ вырсарни кун кăна çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсем хăйсен професси уявне паллă турĕç. Халĕ вара çĕнĕ çул хута кайнипе çыхăннă тепĕр уяв пулчĕ. Çавна май строительсенчен чылайăшĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвĕсене, парнесене, Хисеп грамотисене, Федераци çул-йĕр агентствин грамотисемпе Тав çырăвĕсене, алла çыхмалли сехетсене, "Автобан" çул-йĕрпе строительство компанийĕ" ОАО Тав çырăвĕсене тивĕçрĕ.

Акă чи савăнăçлă самант та çитрĕ. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Федераци çул-йĕр агентствин ертӳçи Роман Старовойт, "Волга" Упрдор ФКУ пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Сергей Мартынов, "Автобан" çулйĕрпе строительство компанийĕ" ОАО генеральнăй директорĕ Алексей Андреев, "Ханты-Мансийскдорстрой" ОАО исполнительнăй директорĕ Николай Балашов, 905-мĕш номерлĕ строительство управленийĕн филиалĕн директорĕ Виктор Шендрик тата аснлă çула тунă çĕрте ĕçленĕ рабочисем çул урлă карнă хĕрлĕ хăйăва касса çул участокне официаллă уçрĕç.

Тӳпене вара компани логотипĕпе вымпелĕ çĕкленчĕ. Çакă строительсем çĕр çине черетлĕ ырă йĕр хăварни пирки хыпарларĕ. Хĕрлĕ хăйăва каснă çулпа вара пĕрин хыççăн тепри "Ханты-Мансийскдорстрой" ОАО тата 905-мĕш номерлĕ СУ самосвалĕсемпе ытти строительство техники иртрĕ.

Сцена çинче те, унăн умĕнче те уяв программи малалла тăсăлчĕ. "Çăлкуç" халăх ансамблĕ пухăннисене юрăташăпа савăнтарчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

"Хĕллехи" вăхăт

## Сехет йĕпписене – пĕр сехет каялла

Октябрĕн 26-мĕшĕнче çур çĕр иртни 2 сехетре Раççей "хĕллехи" вăхăт çине куçать. Сехет йĕпписене пĕр сехет каялла куçармалла пулать. Çавăн хыççăн урăх сехет йĕпписене малалла-каялла куçарма тивмĕ. Сехетсене "хĕллехи" вăхăт çине куçарасси пирки саккун проектне РФ Патшалăх Думи хăрасах икĕ вулавпа йышăннă.

Сехет йĕппиcене "хĕллехи" вăхăт çине куçарассишĕн РФ Патшалăх Думин 442 депутачĕ сасăланă, хирĕç сасăлани 1 депутат. 2014 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнче Раççейре пурăнакансем юлашки хут сехет йĕпписене 1 сехет каялла куçараççĕ, урăх куçарма кирлĕ пулмасть.

"Хĕллехи" тата "çуллахи" вăхăт çине куçассине Дмитрий Медведев президент пуçарăвĕпе 2011 çулхи çулла пăрахăçланă пулнă. Ун чухне Раççейре пурăнакансенчен ытларахăшĕ çакна ырласа йышăннă. Çавăнтанпа çĕр-шыв вĕçĕмех "çуллахи" вăхăтпа пурăнать. Вăл астрономи вăхăтĕнчен икĕ сехет малтарахра. Социологи ыйтăмĕсем кăтартса панă тăрăх каярахпа граждансен шухăш-кăмăлĕ улшăннă.

"Çынсем кăмăлсăр, мĕншĕн тесен эпир халĕ хамăр пурăнмалли вăхăтпа пурăнмастпăр. Вăхăт енĕпе тĕрĕс мар пурăнатпăр. Ку е тепĕр вырăнта хĕвел тухнин вăхăчĕ пур, хĕвел хăçан аннине те пĕлетпĕр. Çак вăхăтпа çыннăн пĕтĕм пурнăç тытăмĕн йĕркелĕвĕ çыхăннă", – çапла ăнлантарать Раççейре "хĕллехи" вăхăт çине куçма кирлине Сеченов ячĕллĕ пĕрремĕш МГМУ лаборатори заведующийĕ Семен Рапопорт.

Клиника иммунологĕ Андрей Продеус çирĕплетнĕ тăрăх вара çын сывлăхĕшĕн çутă кун тăршшĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл депресси аталанма чаракан гормонсене туса кăларма пулăшать. Хальхи вăхăтра Раççейри çынсенчен ытларахăшĕ десинхроноз ларутăрăвĕнче (талăк ритмĕсем пăсăлни) пурăнать.

## Çут çанталăк инкекне пурте пĕрле сирсе ятăмăр

### Тавах сире пурне те çакăншăн

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Çак çăмăлах мар лару-тăрура районти чрезвычайлă лару-тăрăва сирсе ярассипе ĕçлекен штаб, район администрацийĕн явалнă ĕçченĕсене те тав тумасăр май çук. Вĕсем ăçта мĕнле лару-тăру пулнине пĕр самантлăха та куçран вĕçертмерĕç, ĕçе пĕлсе йĕркелерĕç, бригадăсемпе техникăна кирлĕ çĕре вăхăтра çитерчĕç.

Ăçта мĕнле лару-тăрăва пĕлмесĕр тĕрĕс йышăнусем тума çук. Кунта вара ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пысăк ответлăха туйса ĕçленине палăртас килет. Вĕсем вырăнти лару-тăрăва тĕрĕс хак парса, ăçта мĕн кирлине вăхăтра шута илчĕç. Çавăн пекех инкеке сирсе яма килнĕ энергетиксене çĕр каçма вырнаçтарас, вĕсене апат çитерессине йĕркелес ĕçе те вырăнта куçран вĕçертмерĕç. Пысăк тав сăмахĕ вĕсене, çавăн пекех – Муркашри "Сывлăх" ФСК коллективне те.

Пурĕ районта çут çанталăк инкекне сирсе ярас ĕçе 27 бригада (211 çын), 43 единица техника ĕçлерĕ. Унсăр пуçне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем вырăнсенче ял çыннисенчен бригадăсем йĕркелерĕç.

Чĕререн тухакан тав сăмахĕсене манăн уйрăмах районта пурăнакансене калас килет. "Пĕччен хулă хуçăлать", – теççĕ халăхра. Çак çăмăл мар вăхăтра Муркаш районĕнче пурăнакансем пурте пĕр çемьери пек пулчĕç. Инкек килсе çапнă хыççăнхи лару-тăрăва район администрацийĕ мĕн пуçласа вĕçне çитиччен куçран вĕçертмерĕ, инкеке сирсе ярас ĕçе йĕркелесе пычĕ. Хăрасах пур яла та тӳрех çутă, ăшă пама çук. Пĕрин хыççăн тепĕр яла электричество, ăшă çитрĕ, шыв пулчĕ. Чи юлашкинчен октябрĕн 24-мĕшĕнче 12 сехет те 55 минутра Хорнуй ялне электричество çитрĕ.

Тавах сире, хисеплĕ ентешĕмсем, пире ăнланнăшăн. Тата пысăк тав çак инкекрен аиккинче тăрса юлманшăн, май килнĕ таран хусав бригадисене пулăшнăшăн. Эсир хуçălса аннă йывăçсемпе туратсене касса-татса тирпейлес, электричество пралукĕсене, йывăççене шăннă пăртан тасатас ĕçе хастар хутшăнтăр. Тепĕр хут тав сире çакăншăн.

Çут çанталăк пирĕн чăтăмлăха, çирĕплĕхе, эпир пĕр-пĕрне ăнланнине хыттăн тĕрĕслерĕ. Çак "экзамена" эпир сирĕнпе пĕрле чыслăн чăтса иртгертĕмĕр. Чăтса иртгертĕмĕр кăна мар, халăхпа пĕрле, мĕн пур çĕр-шыв çыннисемпе пĕрле инкеке сирсе ятăмăр. Малалла та çапла пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр-пĕрине пе килĕштерсе пурăнасчĕ, пĕр тĕллевпе ĕçлесчĕ. Вара пирĕн район тата та пуянрах, тăван республика, çĕр-шывăмăр вăйлăрах пулĕ.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

Саламлатпăр

Хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, тăвана – Ойкас ялĕнче пурăнакан **Василий Гаврилович ВОЛКОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕ, тăванĕсем.**

Иыхрав

## Черетсĕр 36-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2014 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнчи 62-мĕш номерлĕ хушăвĕпе депутатсен районти пухăвĕн черетсĕр 36-мĕш ларăвне 2014 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме сĕннĕ:

1. Муркаш районĕн бюджетне 2014 çулхи 9 уйăхра мĕнле пурнăçланин итогĕсем çинчен.

2. Муркаш районĕн муниципалитет программисен проекчĕсене тата Муркаш районĕн муниципалитет программисене кĕртме сĕнекен улшăнусене депутатсен районти Пухăвĕн пăхса тухмалли йĕркене çирĕплетесси çинчен.

3. Депутатсен районти Пухăвĕн "Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн Уставне улшăнусем кĕртесси çинчен" йышăнăвĕн проектне халăхпа сӳтсе явма çирĕплетесси çинчен.

4. Шанăçа çухатнă май муниципалитет должноçĕсене йышăнакан çынсене должноçран хăтарассин йĕркине çирĕплетесси çинчен.

5. Депутатсен районти Пухăвĕн 2014 çулхи июлĕн 4-мĕшĕнчи С-34/7 № "Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн территорийĕнче вырнаçнă çĕр участокĕсем тĕлĕшпе халăхпа сӳтсе явмалли сервитутсем тăвассин йĕркине çирĕплетесси çинчен" йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

6. Ял тăрăхĕсен хăш-пĕр полномочийĕсене йышăнасси çинчен.

Ыран – Автомобиль транспорчĕн ĕçченĕсен кунĕ

### ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ АВТОМОБИЛЬ ТАТА ХУЛАРИ ПАССАЖИР ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Сире професси уявĕпе саламлатăп!

Хальхи вăхăтра этем пурнăçĕнче груз турттаракан тата çынсене халăх пурăнакан тĕрлĕ вырăна илсе çитерекен автомобиль тата хулари пассажир транспорчĕсĕр мĕнлерех пурăнасси пирки шухăшлама та йывăр.

Чăваш Енре транспорт çыхăнăвне çирĕппĕн тата кăлтăксăр ĕçлеттерессине йĕркелес енĕпе тухăçлă мерăсем йышăнатпăр. Лайăх аталаннă транспорт инфратытăмне туса хунă, вăл автомобиль транспорчĕпе хулари, хула çумĕнчи тата хуласем хушшинчи маршрутсем тăрăх грузсемпе пассажирсене хăтлăн тата хăрушсăр турттарассине тивĕçтерет.

2013 çулта пурте усă куракан автомобиль транспорчĕн пулăшăвĕпе Чăваш Енре 105,6 миллион пассажир усă курнă. Тепĕр 77,1 миллион çын – хулари электричество вăйĕпе çӳрекен транспорт пулăшăвĕпе. Автотранспорт предприятийĕсем пулăшнипе 2,6 миллион тоннăна яхăн груз турттарнă. Общество транспорчĕ лайăх та кăлтăксăр ĕçлени гражданселен социаллă хăй туйăмлăхĕ çине ырă витĕм кӳрет тата халăх власть органĕсене шанассине ӳстерет.

2012 çултанпа республикăра çул çӳренĕшĕн укçасăр тăлма май паракан автоматланă тытăм ĕçлет. 2014 çултан пуçласа çул çӳремелли электрон билетпа вĕренекенсемпе студентсем те усă курма тытăнчĕç.

Юлашки çулсенче "Усă курма лайăх хутлăх" программа шайĕнче сывлăх тĕлĕшĕнчен хавшак çынсем валли ятарлă троллейбуссемпе автобуссем туянатпăр, вĕсене инвалид кӳмипе çӳрекен сусăр çынсене турттарма юрăхлă туса хатĕрленĕ.

Автомобиль тата хулари пассажир транспорчĕн ĕçченĕсемпе ветеранĕсене пĕтĕм кăмăлтан çирĕп сывлăх, ĕçре çитĕнӳсем, хавхалану, лайăх кăмăл-туйăм, такăр çул, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

### АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ТАТА ÇУЛ-ЙĔР ХУÇАЛĂХĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире хăвăрăн професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çăмăл мар, çав тери яваплă ĕç тăватăр эсир. Паян çулйĕрпе автомобиль транспорчĕ районăн экономика аталанăвĕпе социаллă пурнăçне лайăхлатассинче пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе уйрăлми тачă çыхăннă.

Эсир хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçлама тăрăшатăр. Чылай чухне кăткăс условисенче вăй хуратăр. Хăвăрăн ĕçĕр çынсен пурнăçĕпе çыхăннине те манса каймастăр. Эсир малашне те яваплă пуласса, кулленхи ĕçĕрте хăвăрăн йăнăш ытла та хакла ларасса асра тытасса шанса тăратăп. Çул тунă, юсанă, ăна тытса тăрас ĕçре те, çула тухсан та малалла та тимлĕ пулăр.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, телейлĕ те вăрăм кун-çул сунатăп. Ĕçĕрсем яланах ăнса пыччăр, çулăрсем вара такăр та уçăмлă пулччăр. Инкек-синкек сирĕнтен айккинчен иртсе çӳретĕр. Килте сире яланах çывăх çыннăрсем кĕтсе тăччăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

# Вăл – ăмăрту çĕнтерӳçи




***Сăн ӳкерчĕкре Виталий Петров водителе куратăр. Вăл чылай çул Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăй хурать. Виталий Зиновьевич хуçалăхра кăна мар, район шайĕнче те ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать.***

***Палăртма кăмăллă, кăçалхи вырма тапхăрĕнче тухăçлă тимленĕшĕн вăл районта çулсеренех иртекен "2014 – чи лайăх водитель" конкурс çĕнтерӳçи пулма тивĕçрĕ. Виталий Зиновьевича тырпул уявĕн сцени çине йыхравланă май çакна çирĕплетекен хăюпа, пĕрремĕш степеньлĕ дипломпа тата асăнмалăх парнепе чысларĕç. Ытти çул та вăл малти вырăнсенче пулнă. Çавăн пекех унăн тăрăшулăхне тĕрлĕ шайри Хисеп грамотипе Тав çырăвĕ çирĕплетет.***

***Октябрĕн 26-мĕшĕнче – Автомобиль транспорчĕн ĕçченĕсен кунĕ. Апла пулсан Виталий Петровшăн икĕ хут уяв, ăна çак ятпа саламлар та çирĕп сывлăхпа ăнăçу сунар.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Шоферсем



Кун-çул утти хăвăрт улшăнни, çĕнĕлĕхсем кунсерен вăй илсе пурнăçа кĕрсе пыни паян пур сферăра та кашни утăмрах курăнать. Çак юхăмра çынсем хушшинчи хутшăну мелĕсем анлăланни автомобиль транспорчĕн пĕлтерĕшне уйрăмах ӳстерчĕ. Çапла вара автомашина паян пуянлăх палли мар, хутшăну мелĕ пулса тăчĕ. Апла пулсан водитель ĕçĕн пĕлтерĕшĕ те пурнăçра малти вырăна тухрĕ. Çакна эпир таçта кайма е ĕç тума çула тухсан çеç туйса илетпĕр, хамăр куçпа курса ĕненетпĕр.

...Кĕрхи çумăр йĕпетнĕ çулпа Мăн Сĕнтĕрелле ыткăнакан çăмăл автомашина пĕр тикĕс ĕçлет. "Шофер ăна лайăх пăхса тăрать пулас", – вĕлтлетрĕ пуçра шухăш. Руль умĕнче пыракан та çак вăхăтра манпа калаçса самантлăха та тимлĕхе çухатмарĕ. Унăн ĕçне тата ответлăхне ăнланатăп эпĕ. Çавăнпах пули-пулми сăмахпа ăна чăрмантарассинчен те тытăнса тăратăп: вырăна çитĕпĕр – калаçăпăр.

Николай ĕç вырăнне паян самай иртерех çитрĕ. Унпа пĕрлех автопарк алăкĕ патне водительте пĕрле ĕçлекен тантăшĕ Микул пырса тăчĕ. Çапла çав вĕсем, шаннă ĕçе чунĕпе парăннăскерсем, черетлĕ ĕç кунĕ пуçланиччен хăйсене шанса панă техникăна пăхса-тĕрĕслесе илме хăнăхнă.

– Санăн техника патĕнче пĕлмен япала çук. Айта-ха çынсем киличчен сӳтсе явар. Инçе çул хыççăн ыйтусем çуралчĕç, – чĕнчĕ Николай Щербакова Николай Антонов. Ĕçтешсем хăйсем хыççăнах ĕçе çитнĕ Мăн Сĕнтĕр райпо Канашĕн ертӳçине Людмила Майковăна сывлăх сунса гаражалла кĕрсе кайрĕç. Пытармăпăр, райпо пурнăçпа тан пырассинче водительсен тӳпи те пĕчĕк мар.

**ЛЕТЧИК ПУЛАСШĂНЧЧĔ**

Ялта çуралса ӳссе пурнăç çулĕ çине тухнăскер, Николай Антонов хăйĕн ачалăх çулĕсене час-часах ырăпа аса илет. Нихăçан та иккĕмĕш вырăнта пулма хăнăхман вăл. Çавăнпах шкулта вĕреннĕ çулсенче те тарăн пĕлӳ илессси унăн тĕп тĕллевĕччĕ. Тарăн пĕлӳ çар летчикĕ пулма та кирлĕ-çке. Кинофильмсенче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчи паттăр летчиксен вĕçевĕсем илĕртетчĕç ăна, хăйне те çак çула суйлама чĕнетчĕç. Коля çапла турĕ те. Вăтам шкул хыççăн çар летчикĕ пулас тĕллеве хăй умне лартрĕ, ăна валли пĕлӳ пухрĕ.

Пурнăç çулĕ çине çирĕп тĕллевпе тухнă çамрăкăнне медицина комиссийĕ сывлăхра кăлтăк тупни каччăн ĕмĕтĕнче кĕтмен улшăнусем турĕ, анчах техника патне туртăннă чуна çав-çавах ура хураймарĕ.

Сывлăшра вĕçме Турри пӳрмен-тĕк çĕр çинчи техника хатĕрĕсене алла илмелле. Çак çĕнĕ ĕмĕтпе 18 çулхи каччă Муркашри "Сельхозтехника" пĕрлешӳри водительсем хатĕрлекен курса çырăнать.

Ялсене, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе ытти предприятиорганизацисене тĕрлĕ маркăллă автомашинăсем йышлă килнĕ вăхăтчĕ. Вĕсен рулĕ умне ларасси çав вăхăтри кашни яшăн ĕмĕтĕнчеччĕ. Тӳпене çĕкленме пӳрменнипе килĕшнĕ Коля та автомашина тытăмне, çул-йĕр правилисене алла çирĕп илессине хăй умне лартрĕ. Çиччĕ виçсе суйласа илнĕ тĕллеве салтак ячĕ тухма вăхăт çитнĕ яш пурнăçа кĕртетех.

Права илнĕ 19 çулхи Коля 1976 çулхи çуркунне Мăн Сĕнтĕрти сыватмăшра ГАЗ-51 автомашинăпа ĕçлеме пуçлать.

– Хама çирĕплетсе панă автомашинăна пĕрремĕш хут вырăнтан хускатсан манран телейлĕрех çын çук та пулĕ тесе шутларăм: ĕмĕт пурнăçа кĕчĕ-çке. Анчах çул çитнĕскерĕн нумай вăхăт ĕçлеме тивмерĕ. Кĕркунне çара илсе кайрĕç. Мирлĕ пурнăçри специальность салтакра та кирлĕ пулчĕ. Разведполкра 2 çул водитель ĕçĕпе службăра тăма тиврĕ, – каласа парать иртнине ĕнер пулнă пек ума кăларса Николай Александрович.

Чун ыйтнипе пĕрре суйласа илнĕ ĕçе вăл салтакран таврăнсан та пăрахмасть: тĕрлĕ организацире тĕрлĕ автомашинăпа ĕçлет, хăйĕн ĕç опытне ӳстерет. Нумай çĕрте ĕçлесе Раççейăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пулса курма ĕлкĕрнĕ арçын юлашки 17 çулта Мăн Сĕнтĕр райповĕнче вăй хурать. Çак хушăра тăрăшуллă ĕçпе ырă ята тивĕçнĕ вăл кунта. Çакна Мăн Сĕнтĕр райповĕн, Чăвашпотребсоюзăн Хисеп хучĕсем, Раççей Федерацийĕн Центросоюзĕн ăсталăх палли çирĕплетеççĕ.

Пурнăçăн тĕп пайне Мăн Сĕнтĕр райповĕпе çыхăнтарнă арçыннăн çемйи те çак ĕç коллективĕнчен катара тăмасть. Икĕ ывăл çуратса ӳстернĕ мăшăрĕ Нина Варсонофьевна – райпори ревизи комиссийĕн ертӳçи, аслă ывăлĕ Евгений – райпори ĕç хăрушсăрлăх техникин инженерĕ, водитель.

Ĕç династийĕ пурришĕн вĕсем те, райпора ĕçлекенсем те хĕпĕртеççĕ. Пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн!

– Пурнăçра çак тĕрĕслĕх пуррине куратăп та кунсерен çĕнĕ ĕмĕтсемпе ĕçе тухатăп, хамăн пĕлĕве çамрăксене парассипе тăрăшатăп, – терĕ хăйĕн юлташĕ Николай Щербаков та техника тĕлĕшĕпе пуян опытлă водитель пулнине, унпа кирек епле ыйтăва та сӳтсе явма, вăхăтра пулăшу ыйтма май пуррине палăртса Мăн Сĕнтĕр райпо Канашĕн ертӳçине турттаракан Н. Антонов водитель. Ĕçри тăрăшулăхне кура ăна 2001 çултах автогараж пуçлăхĕ пулма çирĕплетнĕ. Кунти 15 автомашина кулленех рейса тухма хатĕр пулнинче Николай Александровичăн тӳпи пурри те курăнать.

**ÇУР СĂМАХРАН ĂНЛАНАТЬ**

Юлташĕ пекех 58-мĕш çулпа пыракан Николай Николаевич калаçма ӳркенмен арçын. Анчах çак икĕ арçыннăн пĕрпеклĕхĕ пур: ĕçре яваплăха туяканскерсем хăйсем пурнăçланипе, ĕçри опычĕпе мăн кăмăлланмаççĕ, ыттисене пулăшасран та пăрăнса тăмаççĕ.

– Пире, аслă ăрурисене, ĕçре тĕрĕсленнисене, пĕр коллективра ĕçлеме 100 хут та çăмăлрах. Хăшĕн мĕнле саппас пай пуррине е пулма пултарнине эпир пĕлсех тăратпăр, пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланни те ырă пулăм тесе шутлатăп, – сăмах пуçларĕ Н. Щербаков.

Туçи Олкашра çуралса ӳснĕскерĕн ашшĕ ялти малтанхи трактористсенчен пĕри пулнă. Вăл аталантарнă та ĕнтĕ Микулара техника юратăвне. Манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм çакна пытармасть.

– Атте тракторист тата колхоз гаражĕ хамăр кил умĕнчех пулнăран эпĕ пушă вăхăтăн ытларах пайне трактор патĕнче ирттереттĕм. Атте вĕренткеленĕ тăрăх хăшнепĕрне тантăшăмсенчен ытларах пĕлни хавхалантаратчĕ кăна тата ытларах пĕлме хистетчĕ, – аса илчĕ вăл ачалăхри пĕр шиксĕр кунсене.

Ачаллах техникăпа çывăх туслашма ĕлкĕрнĕ каччă 1974 çулта Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан аттестатпа пĕрле тракторист правине (ăна вăл çул класри икĕ яш çеç илме тивĕç пулнă) илсе тухать. Çийĕнчех иккĕшĕ те (тепри Михаил Прокопьев) тăван колхозра тракторпа ĕçлеме пуçлаççĕ. 1975 – 1977 çулсенче Совет Çарĕнче службăра тăнă хыççăн та Н. Щербаков трактор штурвалне алăран ямасть. Тĕрлĕ çулта тĕрлĕ организацире гусеницăллă тракторпа та, кустăрмаллипе те ырми-канми ĕçлет вăл. Ĕç стажĕн ытларах пайĕ (26 çул) вара Ильинка лесничествинче пухăнать.

"Хурçă утпа" çывăх туслашнăскер Ильинка лесничествине реорганизацилесен те техникăран сивĕнмест. Шăп çак вăхăтра вăл Кӳкеçри вĕренӳ центрĕнче водитель правине илет. Юлашки çулсенче тăрăшуллă водитель Мăн Сĕнтĕр райповĕнче райпо председателĕн водителĕнче вăй хурать.

– Н. Антоновпа пĕрле ĕçлеме тӳр килнишĕн савăнатăп. Эпир пĕр-пĕрне пулăшма яланах хатĕр, пĕр-пĕрне çур сăмахран ăнланатпăр, – терĕ юлташĕ çине кăмăллăн пăхса Николай Щербаков.

Хамăра çирĕплетсе панă автомашинăсене эпир хĕле кĕриччен тĕплĕ пăхса юсаса хуратпăр. Çапла вара сивĕ хĕл кунĕсене пысăк юсав ĕçĕсемсĕрех ирттеретпĕр. Çамрăксене те çак çулпа ĕçлеме сĕнетпĕр, – вĕçлерĕ хăйĕн калаçăвне механизаторта тăрăшнă çулсенче тата халĕ район, республика, Раççей Хисеп хучĕсене тивĕçнĕ пĕлĕшĕм.

Ĕçри ăста шоферсене Автомобиль транспорчĕн ĕçченĕсен кунĕпе саламласа гаражран тухрăм.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Николай Антоновпа Николай Щербаков водительсем.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Хăш хуçалăхра мĕнле тӳлеççĕ?

**Укçа-тенкĕ**

Район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕ пĕлтернĕ тăрăх районти ял хуçалăх производство вун икĕ организацийĕнче ĕçлекенсене кăçалхи январь – сентябрь уйăхĕсенче ĕç укçи тӳлесси çапларах пулса пынă. Тĕпре – статистикăн ФП – 4 формăллă отчечĕ.

"Муркашри чăх-чĕп фабрикинче" вăтамран 149 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ çӳлерех асăннă тапхăрти (малалла та çапла ăнланмалла) 22676 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 16910 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 15715 тенкĕ.

"Путь Ильича" агрофирмăра вăтамран 80 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 10137 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 14079 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 13283 тенкĕ.

"Свобода" хуçалăхра вăтамран 83 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 9084 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 12161 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 9715 тенкĕ.

"Оринино" хуçалăхра вăтамран 73 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 7767 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 11822 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 8370 тенкĕ.

Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăтамран 80 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 8326 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 11564 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 8322 тенкĕ.

"Ударник" хуçалăхра вăтамран 125 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 11658 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 10363 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 9664 тенкĕ.

"Герой" хуçалăхра вăтамран 60 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 6062 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 11226 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 8312 тенкĕ.

Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăтамран 32 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 2919 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 10135 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 8949 тенкĕ.

Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăтамран 90 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 7309 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 9023 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 7444 тенкĕ.

Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăтамран 30 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 2210 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 8185 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 7341 тенкĕ.

"Передовик" хуçалăхра вăтамран 20 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 1420 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 7889 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 9028 тенкĕ.

"Восток" хуçалăхра вăтамран 30 çын вăй хурать. Ĕç укçин фончĕ 1924 пин тенкĕпе танлашать. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 7126 тенкĕ. Иртнĕ çулхи кăтарту – 5792 тенкĕ.

Çӳлерех асăннă хуçалăхсенче вăтамран 852 çын вăй хурать, иртнĕ çулхи çак тапхăрта 987 çын пулнă е çакă 86 процент. Вĕсен пĕтĕмĕшле ĕç укçи фончĕ 91492 пин тенкĕ, иртнĕ çул вăл 88417 пин тенкĕ пулнă. Пĕр çыннăн уйăхри вăтам ĕç укçи 11932 тенкĕ, иртнĕ çул 9954 тенкĕ пулнă. Ĕç укçи ӳсĕмĕ вăтамран 120 процентпа танлашать. Районти пĕр хуçалăхăн унта ĕçлекенсем умĕнчи парăмĕ – 1800 пин тенкĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Пирĕн пата çыраççĕ**

## Ватă çынна хисеплеме, кĕнекене юратма пĕлер

Çанталăк хăвăрт улшăнни куç умĕнче. Иртнĕ кунсем пирки те асăнмасăр хăварас килмест. Пĕр хĕвеллĕ те илемлĕ кĕр кунĕнче, йывăç-тĕм çинчи сарални та хĕрелнĕ çулçă ӳксе пĕтеймен вăхăтра, тавралăх илемĕпе киленсе Шатракасси шкулĕнчи пултаруллă та активлă вĕренекенсен пĕр ушкăнĕ ватă çынсем патне çитсе килчĕ. Пирĕн патри çамрăк вулавçăсем кун пек çӳрессине ыра йăлана кĕртсе пыраççĕ. Маттур ачасем тĕрлĕ сăвă вĕренсе кинемейсемпе мучисене каласа парса хавхалантараççĕ, çирĕп сывлăх сунма та манмаççĕ.

Римма Карачева, 1941-мĕш çулта çуралнăскер, ĕç ĕмĕрĕнче тĕп бухгалтерта тимленĕ. Çулĕпе сумлă çыннăмăр кĕнеке вулама питĕ юратать, çавăнпа та эпир сĕннĕ "Иван Мучипе Лапшу Çтаппанĕ", "Пирĕн урам анаталла", "Хăтăлаймастăн, Похлебкин", "Çăвара мĕншĕн хупласçĕ", "Уртем мучи халап-юмахĕ" кĕнекесене суйласа илчĕ.

Зинаида Андреева та чăваш çыравçисен хайлавĕсене питĕ кăмăллать. Вăл вара "Ах тăварлă-çке кĕвĕçӳ пулĕ" кĕнеке вулама кăмăл турĕ. Çавăн пекех район пурнăçне туллин çутатакан "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçатăн çĕнĕ номерĕсене суйласа илчĕ.

Райăпа Семен Волковсем, Вера Замкова та ачасене хапăл туса кĕтсе илчĕç, хăйсем патне татах та килме ыйтрĕç. Ватă çынсем ачасемпе тĕрлĕ калаçу сӳтсе яваççĕ, иртнине аса илеççĕ, хальхине тишкереççĕ. Ăшă сăмах вара эмелтен те сиплĕрех. Ыра йăлана эпир малашне те тăсма тăрăшăпăр.

## Туслăх пытăр ĕмĕре

Пирĕн Чăваш Республикинчи Муркаш районĕпе Мари Республикинчи Горномарийски районĕнче пурăнакансем мĕн авалтанах тачă çыхăну тытаççĕ. Пирĕн район шайĕнчи тĕрлĕ уявра та вĕсене хамăр патра хăнара тăтăшах курма пулать. Унти артистсем пире хăйсен чĕлхипе хатĕрленĕ концерт программисемпе савăнтараççĕ. Паллах, чăвашсем те парăмра юлмаççĕ, вĕсем патĕнчи тĕрлĕ мероприятие активлă хутшăнаççĕ. Мăн Сĕнтĕр салинче те тăтăшах вĕсен калаçăвне илтетпĕр.

Юрă-ташăра кăна мар, уй-хир ĕçĕнче те пĕрлех тимлетпĕр, фермерсене пулăшатпăр. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, пирĕн тăрăхра çеç мар, вĕсен республикинче те ял хуçалăхĕнче тимлеме ĕç алли çителĕксĕр. Çавăнпа та туслăха ял хуçалăхĕнче те пĕрлех тăсатпăр. Пирĕн районти ĕçченсем черетлĕ тапхăрта вара çармăс çĕрĕ çинче пахча çимĕç пухрĕç, техникăпа тимлерĕç, çапла майпа мĕн акни-лартнине вăхăтра пухма тăрăшрĕç.

Пĕррехинче эпĕ çамрăксен пĕр ушкăнĕпе калаçу пуçартăм. Вĕсем те вĕренӳрен пушансан, каникул вăхăтĕнче, пускилти республикăна çул тытаççĕ. Вĕсенчен пĕри Николай Соловьев Ильинка шкулĕнче 11-мĕш класра вĕренет.

– Манăн атте-аннерен укçа-тенкĕ ыйтас килмерĕ, çавăнпа та хамăн алăпа ĕçлесе илес килчĕ, эпĕ те чаплă телефон туянăп, – терĕ вăл.

Мĕнех ачасен ĕмĕчĕ пурнăçлантăрччĕ, вĕренӳпе ĕçе тивĕçлĕ шайлаштарса пырсан, тен, хамăр тăрăхра та фермер хуçалăхĕсем йышланĕç, унпа танах – хушма ĕç вырăнĕсем те.

**И. ТАЙМАСКИНА,**
**Шатракасси ял библиотекин ертӳçи.**

## Пире савăнтарса хăварчĕç



**Нумаях пулмасть ветерансен вăхăтлăх пурăнмалли Мăн Сĕнтĕрти уйрăмĕнче Атапайри Культура çурчĕн коллективĕ хăнара пулчĕ. Юрă-кĕвĕ ăстисем пире савăнтарса хăварчĕç, пысăк парне турĕç. Хăш-пĕр юрри вара эпир çамрăк чухнехи пулнăран иртнĕ çулсене аса илтĕмĕр. Вĕсем йăлтах чуна пырса тивекеннисем, ирĕксĕрех куçа шывлантарчĕç. Эпир артистсене çирĕп сывлăх сунса тав тăватпăр, вĕсене татах та хамăр патра кĕтетпĕр.**

**Ветерансем.**

## Çĕнĕ сезон уçăлчĕ

"Шуçăм" халăх юрăпа ташă ушкăнĕ тата тĕслĕх "Калинка" ташă ушкăнĕ Москакассинчи информаципе культура центрĕнче октябрĕн 11-мĕшĕнче хăйĕн черетлĕ çĕнĕ сезонне уçрĕ. "Шуçăм" ушкăн "Чечеклен, юратнă Чăваш Ен" юрăпа ташă сюитипе тухрĕ. Концерт программине Алина Любимовăпа Сергей Николаев ăста ертсе пычĕç. Палăртнă вăхăта Культура çуртне халăх йышлă пухăнчĕ. Кашни номере куракан парне вырăнне йышăнчĕ. Пирĕн юрă-кĕвĕ вĕсен чунĕсене тыткăнлани аванах курăнчĕ. Паллах, çакă артист кăмăл-туйăмне çĕклет.

Тĕслĕх "Калинка" ташă ушкăнĕ те залра ларакансене савăнтармаллипех савăнтарчĕ. Куракан хушшинче ташăçăсен ашшĕ-амăшĕ йышлă пулчĕ. Паллах, вĕсем питĕ савăнчĕç ачи-пăчи çавăн пек маттурришĕн.

Çапла вара зала пухăннă пысăк йыш тулли кăмăл-туйăмпа саланчĕ килелле. Апла пулсан черетлĕ çĕнĕ тапхăр эрешлĕ чаршав хыçĕнчен ăнăçлă тухрĕ тесе шухăшлатпăр эпир, артистсем. Ку сезон та тухăçлă иртессе шанатпăр.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакассинчи информаципе культура центрĕн ертӳçи.**

**Официально**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТОГО АУКЦИОНА**

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее – организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее – аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров аренды муниципального имущества, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики № 1055 от 22.10.2014 года "О проведении открытого аукциона на право заключения договора аренды муниципального имущества Моргаушского района Чувашской Республики и утверждении аукционной документации".

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

Контактные лица: Захаров И.Н., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66

Характеристика объектов аренды:

**Лот №2:** Комнаты № 5, 6, расположенные на первом этаже нежилого административного здания (УСХ) (Лит.А3) по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6 Литер: А3; общая площадь – 154,2 кв.м.; инвентарный номер БТИ-13440.

Начальная цена – 167903 (сто шестьдесят семь тысяч девятьсот три) рубля 08 коп. с НДС, без коммунальных и эксплуатационных расходов.

Сумма задатка – 10% от начальной цены (16790 руб. 30 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной цены (8395 руб. 15 коп.).

Срок аренды – 5 лет.

Целевое назначение – использование под столовую, кафе.

Информация о проведении аукциона:

Для участия в аукционе заявитель должен представить заявку установленного образца. Заявка оформляется на русском языке в письменной форме и должна быть подписана уполномоченным на то лицом и скреплена печатью.

Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по адресу организатора аукциона со дня опубликования извещения о проведении аукциона и размещения его на официальном сайте Российской Федерации в сети "Интернет" для размещения информации о проведении торгов (http://torgi.gov.ru).

Данное сообщение является публичной офертой для заключения договора о задатке в соответствии со статьей 437 Гражданского кодекса Российской Федерации, а подача претендентом заявки и перечисление задатка являются акцептом такой оферты, после чего договор о задатке считается заключенным в письменной форме.

Срок окончания приема заявок на участие в аукционе – 26 ноября 2014 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за пять дней до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

Задаток перечисляется заявителем до даты окончания представления заявок на участие в аукционе по следующим реквизитам:

Получатель: Управление Федерального казначейства по Чувашской Республике администрации Моргаушского района, р/с 40302810097063000120, л/с 05153002030 в ГРКЦ НБ Чувашской Республики Банка России г. Чебоксары, БИК 049706001, ИНН 2112001366 КПП 211201001, ОКТМО 97 632 000. Документ, подтверждающий перечисление задатка представляется заявителем одновременно с заявкой на участие в аукционе.

С документацией об аукционе можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж, а также на официальном сайте Российской Федерации в сети "Интернет" для размещения информации о проведении торгов (http://torgi.gov.ru).

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров аренды муниципального имущества может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании комиссии – 01 декабря 2014 г. в 15 часов 00 минут по адресу организатора аукциона.

Аукцион проводится в присутствии членов комиссии и участников аукциона (их представителей) – 04 декабря 2014 года Лот №1 в 10 часов 00 минут.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы, либо действующий правообладатель, если он заявил о своем желании заключить договор по объявленной аукционистом наиболее высокой цене договора.

Протокол аукциона подписывается всеми присутствующими членами комиссии в день проведения аукциона.

Договор аренды с победителем аукциона должен быть подписан не ранее чем через 10 дней со дня размещения информации о результатах аукциона на официальном сайте торгов.

**Техническая ошибка**

Администрация Моргаушского района сообщает, что в извещении, опубликованном в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 11.10.2014 № 78 (8239) о проведении аукциона, допущена техническая ошибка. В проводимом 14 ноября 2014 года открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи земельных участков вместо:

"2. Установить начальную цену земельных участков (на основании отчетов независимых оценщиков):

по лоту № 1 в размере 407000 (четыреста семь тысяч) рублей;

по лоту № 2 в размере 138000 (сто тридцать восемь тысяч) рублей;

по лоту № 3 в размере 123000 (сто двадцать три тысячи) рублей;

по лоту № 4 в размере 139381 (сто тридцать девять тысяч триста восемьдесят один) рубль;

по лоту № 5 в размере 204950 (двести четыре тысячи девятьсот пятьдесят) рублей;

по лоту № 6 в размере 45066 (сорок пять тысяч шестьдесят шесть) рублей;

задаток установить в размере 20% от начальной цены земельного участка;

шаг аукциона установить в размере 5% от начальной цены земельного участка;

победителем аукциона признается участник торгов, предложивший наибольшую цену земельного участка", следует читать:

"2. Установить начальную цену земельных участков (на основании отчетов независимых оценщиков):

по лоту № 1 в размере 407000 (четыреста семь тысяч) рублей;

по лоту № 2 в размере 138000 (сто тридцать восемь тысяч) рублей;

по лоту № 3 в размере 123000 (сто двадцать три тысячи) рублей;

по лоту № 4 в размере 204950 (двести четыре тысячи девятьсот пятьдесят) рублей;

по лоту № 5 в размере 139381 (сто тридцать девять тысяч триста восемьдесят один) рубль;

по лоту № 6 в размере 45066 (сорок пять тысяч шестьдесят шесть) рублей;

задаток установить в размере 20% от начальной цены земельного участка;

шаг аукциона установить в размере 5% от начальной цены земельного участка;

победителем аукциона признается участник торгов, предложивший наибольшую цену земельного участка".

# Çĕнтерӳçĕ салтак, паллă вĕрентекен, çыравçă

**Михаил Яковлевич Гаврилов çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май (20.10.1924 – 01.05.2012 ç.ç.)**

Юбилей



2014 çулта паллă датăсем нумай пулчĕç: Муркаш районĕ 70 çул тултарни, Андриян Николаев космонавтăн 85 çулхи юбилейĕ, Пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланнăранпа 100 çул çитни т. ыт. те. Çак кунсенче вара пирĕн паллă ентеш М.Я. Гаврилов çуралнăранпа 90 çул çитрĕ.

Аслăрах çулсенчи çынсем кăна мар, çамрăкраххисем те нумайăшĕ ăна лайăх ас тăваççĕ: е пĕрле ĕçленĕ, е унăн хаçат-журналти статйисемпе хăй çырнă кĕнекисене вуланă, е хăйĕнпе курса калаçнă (сăмах май Михаил Яковлевич хăйĕн аса илĕвĕсене пухса самаях калăпăшлă 4 кĕнеке кăларнă, шкул ачисемпе час-часах курнăçнă).

Мĕнпе асра юлнă-ха район тата республика историйĕнче Юнкă тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ пирĕн ентеш? (Унăн биографине Муркаш районĕн кĕске энциклопедийĕнче е Чăваш энциклопедийĕнче те вуласа пĕлме пулать). Чи малтанах – вăрăм та ăнăçуллă педагогика ĕçĕпе. Ахальтен мар вăл Чăваш Республикин (вăл вăхăтра ЧАССР) тата Раççей (ун чухне РСФСР) тава тивĕçлĕ учителĕн ячĕсене илме тивĕç пулнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Сталинград çапăçăвĕнчен пуçласа (унта вăл йывăр аманнă), Белоруссие ирĕке кăларма хутшăнса, Хĕвел Тухăç Пруссипе Польша çĕрĕсем урлă Берлина çитнĕ, виççĕмĕш степень Мухтав орденне, "Паттăрлăхшăн", "Çапăçури хастарлăхшăн" тата ытти нумай медале тивĕçнĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче М.Я. Гаврилова Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденне, Аслă Отечественнăй вăрçăн 1-мĕш тата 2-мĕш степень орденĕсене тата нумай медаль парса чысланă.

1969 çултан пуçласа мĕн виличченех (2012 ç.) М.Я. Гаврилов Шуршăлта пурăннă, малтанах шкул директорĕ (30 çула яхăн), кайран учитель пулса ĕçленĕ. Шуршăлти Космонавтика музейне пуçарса яраканĕ те Михаил Яковлевич пулнă. Çак пысăк ĕçре ăна республика ертӳçисемпе ĕçлĕ çыхăну тытни те, мухтавлă космонавтăмăрпа Андриян Николаевпа, ытти космонавтсемпе туслă çыхăну тытни те питĕ пулăшнă. Çав вăхăтрах тăван районпа, тăван килпе те çыхăну татман: кашни çулах çуллахи вăхăта çемйипе Юнкă ял тăрăхĕнчи Пĕрремĕш Май выççăлккинче ирттернĕ.

М.Я. Гаврилов мăшăрĕпе Виктория Николаевнăпа виçĕ ывăл тата икĕ хĕр пăхса çитĕнтернĕ, ашшĕ килне çĕнетнĕ. Михаил Яковлевича хăйсен ялĕн çăви çине ашшĕпе юнашар пытарнă. Ашшĕ, Яков Гаврилович, Пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăннăскер, таврари паллă тимĕрçĕ пулнă, çак ял çăвин пуçĕ шутланать.

Муркаш район историйĕнче те М.Я. Гаврилов паллă йĕр хăварнă теме юрать. Сăмахран, 1957 – 1964 çулсенче Муркашри вăтам шкул директорĕ пулса ĕçленĕ, шкулăн çĕнĕ йывăç çуртне туса пĕтерсе хута ярас ĕçе пысăк тӳпе хывнă, çĕнĕ урам (хальхи Учительсен урамне) уçнă, Çĕнтерӳ паркне хывакан пуçаруçăсенчен пĕри пулнă (1957 – 1958 ç.ç.). Çав вăхăтрах общество ĕçсенче те хастар пулнă, Е.А. Андреев председательпе, район ертӳçисемпе тачă çыхăну тытса ĕçленĕ, П.П. Хусанкай поэтпа, Г.Н. Волков, Д.Е. Егоров педагогсемпе, Болгарири паллă çыравçăсемпе туслă çыхăну тытнă.

1964 – 1969 çулсенче Юнкăри вăтам шкулта директор çумĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра Спиридон Михайлович Михайлов-Янтуш историк-этнограф кун-çулĕпе ĕç-хĕлне тĕпчесе пĕтĕмлетес тĕллевпе нумай ĕç туса ирттернĕ. Истори учителĕ пулса ĕçленĕ Михаил Яковлевич тăрăшнипе Юнкă шкулĕ çак тăрăхра çуралса ӳснĕ паллă ăсчах-куçаруçă Спиридон Михайлов ячĕпе хисепленме пуçланă, халĕ те ун ячĕпех хисепленет. Мĕншĕн тесен кунта вăй хуракансен коллективĕ çак ята тивĕçлĕ шайра тытса тăрать. Паллах, Михаил Гаврилов ятне те çак шкулта манса кайман...

Çĕнтерӗве вăрçăра е тылра туптанă паттăрсен ятне, вĕсем вăрçă хыççăнхи е каярахри йывăр çулсенче ырми-канми тăрăшса пурнăçа лайăхлатассишĕн тимленине çамрăк ăрусен яланах асра тытмалла, пурнăçра çак паттăрсенчен тĕслĕх илмелле. Ку та – пирĕн культура шайне кăтартакан паллă.

**В. ФЕДОРОВ.**
**И. КАРГИН сăн ӳкерчĕкĕ.**

***

**Аяларах М.Я. Гаврилов пичетлесе кăларнă аса илӳ кĕнекисенчен илнĕ хăш-пĕр сыпăксене пичетлетпĕр. Вырăсларан вĕсене В. Шапошников куçарнă.**

***СĂМАХ МАЙ. М.Я. Гаврилов çуралнăранпа 90 çул тултарнă май Муркашри тĕп библиотекăра вăл çырнă кĕнекесемпе статьясен, аса илӳсен куравне йĕркеленĕ. Сире унти материалсемпе паллашма сĕнетпĕр.***

## "Вăрçă çулĕсем"

**(6 – 7-мĕш стр.)**

"Çур çула яхăн эпĕ лавсем умĕнче Розăпа пĕрле утса пытăм. Эпир чылай юмах яма ĕлкĕртĕмĕр. Вăл каласа панă тăрăх Розăна вĕрентме Москакассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкула яраççĕ. Çара илнĕ аппăшĕ Валя хальлĕхе Шупашкарта иккен. Халĕ вăл ун патне каять те. Розăпа эпир пĕр-пĕрин патне çыру çӳретме калаçса татăлтăмăр. "Кĕт мана", – терĕм эпĕ. Вăл макăрса ячĕ те хăй кĕтесси пирки пĕлтерчĕ.

Çĕрле Ильинкăна çитрĕмĕр. Пăрахут пулмарĕ. Пристаньрен инçех мар урапа çинче çĕр каçрăмăр. Ирхине те тăвалла каякан пăрахут пулмарĕ. Эпир Атăл шывĕпе çăвăнтăмăр. Эпĕ каллех Розăпа чылайччен калаçрăм, Атăл çыранĕ тăрăх утрăмăр. Аттене çакă кăмăла каймарĕ: "Мĕн кирлĕ кунта ку хĕр ачана?". Эпĕ ăна ăнлантарса патăм: вăл анаталла каякан пăрахут кĕтет, Шупашкара Валя аппăшне курма каять.

Ку калаçу хыççăн эпĕ Роза патне час-час пыма пăрахрăм, аттерен тата Меркурирен именерех тăтăм. Роза Николай Ятрушевпа нумай пакăлтатрĕ. Вăл Валя савнийĕ пулни пирки мана Роза хăй каласа панăччĕ.

Атте пăрахут килессе кĕтет, пире ăсатса ярасшăн. 12 сехет те çитрĕ ĕнтĕ, пăрахут вара курăнмасть. Мана çара ăсатнă чухне ăсатакансем çул çине тесе 1 пин тенкĕ ытла укçа пуçтарса парса янăччĕ. Эпĕ хам валли 300 тенкине хăвартăм та ыттине аттене патăм. Атте ăна илесшĕн марччĕ: "Хăвнах кирлĕ пулĕ", – тет. Эпĕ вара хам сăмахран чакмарăм: "Пирус туртмастăп, укçа мана кирлех мар, – терĕм. – Çитменнине пире казармăсенчен те кăлармĕç, фронтра вара укçапа мĕн тăвас?".

Горький хулине каякан пăрахут çитсе чарăнчĕ. Эпир виççĕмĕш класра вырнаçрăмăр. Пăрахут тепĕр икĕ сехет тăрать тесе хыпарларĕç. Аттен вара кĕтме вăхăт çук: колхозра лашасем кĕтеççĕ, вырма ĕçĕсем пыраççĕ. Эпĕ ăна пăрахут тапраниччченех кайма сĕнтĕм. Çапла вара эпир сыв пуллашрăмăр.

– Ывăлăм, аçу-аннӳн пилне ан ман: хăвна сыхла, киле таврăнмалла пултăр, эпир питĕ кĕтетпĕр, – терĕ вăл куççульне шăлнă май.

– Атте, ан пăшăрхан. Сирĕн пил сăмахне манмăп, киле сывах таврăнма тăрăшăп, тен вăрçи те часах вĕçленĕ-ха, – хуравларăм эпĕ.

Эпир ыталашсах уйрăлтăмăр, аттепе Меркурий каялла çула тухрĕç.

Атăл тăрăх анаталла каякан пăрахут та çитрĕ, пирĕн пăрахут çумне чарăнчĕ. Нумаях тăмарĕ вăл, анаталла çул тытрĕ. Роза унпа каймарĕ. Эпĕ ăна пăрахут халь-халь тапранасси пирки пĕлтертĕмччĕ. Вăл йăмăкĕ патне паян каймастăп тесе хуравларĕ, пире ăсатса яма пулчĕ.

Пирĕн пăрахут вăрăммăн кăшкăртса часах тапранасси пирки пĕлтерчĕ. Эпир именчĕклĕн ыталашрăмăр. Пăрахут ерипен пристаньрен уйрăлма пуçларĕ. Розăпа Мария макăраççĕ, пире тутăрĕсемпе сулаççĕ. Пирĕн пăрахут пăрăнчăк хыçĕнче курăнми пуличченех çыран хĕрринче икĕ хĕрарăм кĕлетки куçран каймарĕ. Эпир те вĕсене сăмса тутăрĕсемпе сулларăмăр.

Петр Селюшкин куççулĕ витĕр çапла каларĕ: "Манăн чĕре туять, йăмăксемпе шăллăма тек урăх курайрас çук, фронтра вилетĕп пулĕ". Эпир Паша Любимовпа иксĕмĕр ăна лăплантарма тăрăшрăмăр, фронтра пурте вилмеççĕ вĕт-ха. Иван Салдакеев, Николай Суворов авă аманса таврăнчĕç. Шел пулин те, Петя Селюшкинăн чĕри улталаман, часах вăл фронтра пуçне хучĕ".

## "Чăваш Республикинчи Шуршăл ялĕнче космонавтика музейне епле тунă"

**(16 – 17-мĕш стр.)**

"А.Г. Николаев космонавтпа иккĕмĕш хут Муркашра тĕл пулнăччĕ. РСФСР Аслă Канашĕн депутачĕн кандидачĕ пулнă май вăл 1963 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче суйлавçăсемпе тĕл пулма килнĕччĕ. Ун чухне эпĕ Юнкăра ĕçлеттĕм, çемье Муркашрах пурăнатчĕ-ха. Канмалли хĕвеллĕ кун эпир Викторипе килтех пулнăччĕ. Иртенпех кил хушшинче ĕçленĕ пирки космонавтпа тĕл пулу митингĕ пуласси пирки вырăнти радиопа пĕлтернине илтмен. Эпир митинг-тĕл пулăва уçнине кăна илтрĕмĕр. Тумтирсене хăвăрт улăштартăмăр та ачасене пĕрле илсе Культура çурчĕ патне васкарăмăр. Халăх туллиехчĕ ĕнтĕ кунта.

Трибуна патнерех хĕсĕнме май тупрăмăр. Хăйĕн сăмахĕн пĕр пайне чăвашла та каларĕ вăл. Хăй Индие, Индонезие кайса килни, Сукарно президентпа тата унăн хĕр ачисемпе тĕл пулни пирки каласа пачĕ. Уншăн асра юлмалли самант Индонезире килте пысăк мар ула сыснасене тытса усрани пулнă. Аслă Отечественнăй вăрçăччен кун пек сыснасене чăвашсем те хăйсен хуçалăхĕсенче усранă. Виктори çав кун пĕрремĕш хут космонавта патĕнченех курма пултарчĕ.

Çав кун А.Г. Николаев Муркашра апатланнă май колхоз председательне Евтихий Андреевич Андреева Шуршăл ялне пыма, унти колхоза ертсе пыма йыхравларĕ.

– Колхоз ман ятпа хисепленет. Колхоз председателĕнче çавăн пек талантсăр (М.И. Ильин) пулнăран мана намăс, ĕçсем унта питĕ япăх, – терĕ вăл. – Евтихий Андреевич, эсир шутлама пултаракан çĕр ĕçченĕ тата пултаруллă йĕркелӳçĕ, эсир Шуршăл колхозне малтисен ретне кăларас тĕлĕшпе манăн иккĕленӳ çук. Эпĕ хам вăй çитнĕ таран сире ку тĕлĕшпе пулăшма шантаратăп.

Анчах та чăннипех пултаруллă хуçалăх ертӳçи Евтихий Андреевич ку сĕнĕве тӳрех хирĕçлемен пулин те, космонавт сĕнĕвĕпе килĕшмен".

## "Гавриловсен йăхĕн историйĕ"

**(47 – 48-мĕш стр.)**

"Атте хăйĕн ĕмĕрĕнче нумай çӳренĕ, нумай курнă,14 çула яхăн çарта пулнă, вырăссемпе яппунсен тата Пĕрремĕш тĕнче вăрçисене хутшăннă. Сахал мар вуланă. Раççей историне, вырăс патшисен ăрат çыхăнăвне лайăх пĕлнĕ, Раççее юратнă. Пире те вăл, хăйĕн ачисене, хамăрăн Тăван çĕр-шыва – Раççее юратма хăнăхтарнă. Уйрăмах вăл Иван Сусанин çинчен, монгол-тутарсемпе, Польша интервенчĕсемпе çапăçни çинчен каласа пама юрататчĕ, Аслă Петĕр патшана юрататчĕ, хресченсене пусмăрласа тăнă крепостной помещиксем çинчен каласа паратчĕ... Илемлĕ Киев хули, Варшава, Петербург, Мускав çинчен кала-кала кăтартатчĕ. Хăй Мускав Кремлĕнче пулни, Аслă Иванăн чанĕ патне хăпарни, унтан Мускав инçĕшне пăхса киленни пирки каласа панине итлеме кăмăллăччĕ.

Вăрçă хыççăн, хăй ун чухне 75 çулта пулнă пулин те, Мускава тата Киева кайса курас кăмăллăччĕ. 1946 çулта вăл çапах та Мускава кайса килчĕ, авалхи Кремль стенисем патĕнче пулса курчĕ. Унтан таврăннă хыççăн çапла каланине ас тăватăп: "Халĕ вилме те шалккă мар. Çав-çавах Мускава кайса курса килтĕм". Аннене те Мускава илсе кайса кăтартасшăнччĕ, шел пулин те, ку ĕмĕчĕ унăн пурнăçланаймарĕ.

Вырăс халăхĕн паттăрлăхĕ пирки атте пире тăтăшах каласа паратчĕ. Тĕнчере Раççее çапса аркатма пултаракан вăй пулманни пирки çирĕп ĕненетчĕ тата пирĕнте те çав туйăма аталантаратчĕ. Çакна истори те лайăх çирĕплетсе парать. Руçь çине тапăнса кĕнисем пĕрре кăна пулман, вырăс халăхĕ яланах çĕнтерӳпе тухма пултарнă. Истори учителĕ Мария Хрисановна Алексеева та пире кун пирки самай тăна кĕртнĕ.

Пысăк вăй вăл патриотика воспитанийĕ! Нимĕç фашисчĕсем Мускав патне çитсен (1941 ç.) Чăваш Енре те Сура тата Атăл çыранĕсенче танк çулне пӳлмелли канавсем чавнă, блиндажсем тунă чухне оборона сооруженийĕсем тунă çĕрте ĕçлекен çамрăксем хушшинче енчен те нимĕççене Атăл хĕрринче кĕтсе илме хатĕрленетпĕр пулсан тин вĕсене чарма çук текен сас-хура саракансем те тĕл пулатчĕç. Эпĕ кун пеккисене тарăхса хуравлаттăм: "Тĕнчере хальлĕхе Руçе парăнтаракан вăй пулман-ха!". Совет халăхĕ яланах çĕнессе шанса тăни, килте те, шкулта та мана çакна тĕпе хурса воспитани пани фронтра та çирĕп салтак пулма май пачĕ.

Аттене ватлăх çулĕсенче хуçалăха тытса тăма, икĕ ывăлне ура çине тăратма çăмăл пулман. Аннене вара татах та йывăр килнĕ. Вăл уксах пулнă пулин те, колхозри пур ĕçе те хутшăнма тăрăшнă. Вăл çавапа утă çулаймастчĕ, çурлапа тырă вырма та йывăр пулнă. Ытларах чухне вăл жнейка хыççăн кĕлтесем пухатчĕ. Утă çулнă тата тырă вырнă вăхăтра яланах колхозра вĕри апат çитерессине йĕркелетчĕç. Çак сезонлă ĕçсенче анне яланах поварта тимлетчĕ. Вăл епле тутлă пĕçерме пултарнинчен пурте тĕлĕнетчĕç.

Çулленех çуркунне çурхи тырăсене çумламалла пулнă. Ун чухне çум курăкне пĕтерме хими имçамĕсемпе гербицидсем пулман. Эпир те аннепе çак ĕçсене хутшăнаттăмăр. Çум курăкне пухаттăмăр та уй хĕррине е çул хĕррине купалаттăмăр. Кайран вара кăнтăр апатне кайнă чухне вĕсене пĕрле çыхса е михĕсене тултарса килти выльăха тăрантарма йăтса каяттăмăр. Анне вăрманта кăк кăларнă вырăнта та ĕçлетчĕ. Кайран вара Выççăлккăна пурăнма куçсан пирĕн патра вăрман сахал мар пулнă. Салтыпа варĕнчен тытăнса Ӳкле кӳлли таранах вăрман тăрăхĕ тăсăлнă".

Редакци почтинчен

## Муркашсенче çынлăх куртăм

Муркаш районне ку таранччен те килсе çӳреме тӳр килнĕ-ха манăн: эпĕ Шатракасси ялĕнчи ачана усрава илнĕччĕ. Халĕ вара пӳрт-çуртпа çыхăннă ыйтăва татса памалла пулса тухнăран Муркаш çĕрĕ çине каллех çитрĕм.

Ĕçе Катькас ял тăрăхĕн администрацийĕнчен тытăнмалла пулчĕ. Унта мана ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Лебедев мĕн хыççăн мĕн пурнăçламаллине тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Çак йĕркеллĕ те кăмăллă çын манăн пĕр ыйтăва та тимлĕхсĕр хăвармарĕ.

Кадастр палатине Муркаш салине çитрĕм. Кунта та çав тери ырă чунлă çынсем ĕçленине палăртас килет. Надежда Королькова тата Светлана Бубнова инженерсем, çамрăк пулин те, хăйсен ĕçне лайăх пурнăçлама пĕлни палăрчĕ. Пĕтĕмпех ăнлантарчĕç, сĕнӳ-канашпа та пулăшрĕç.

Епле лайăх та ырă кăмăллă çынсем Муркашра тесе шухăшласах БТИ-не çитрĕм. Кунта учреждени ертӳçипе Владимир Калининпа тата Андрей Спиридонов специалистпа тĕл пулса хамăн ыйтăва пĕлтертĕм. Вĕсем те хăйсен ĕçне кĕске вăхăтрах тата пысăк ăсталăхпа пурнăçларĕç.

Чăнах та, савăнса тĕлĕнтĕм Муркашсенчен. Кунта çула тухиччен темĕнле ăнланманлăхпа та, йывăрлăхпа та тĕл пулма тивĕ тесе шухăшланăччĕ. Муркаш районĕ çинчен, çыннисем çинчен, чăнах та, хаçатра та, радиопа телевидени урлă та лайăххине нумай илтнĕ. Халĕ хам куçпах курса ĕнентĕм: чăнчăн çынсем пурăнаççĕ Муркашра. Эпĕ тахçанах тивĕçлĕ канура, апла пулин те "Нарспи" юрăпа ташă ушкăнне çӳретĕп, çапла май чылай çынпа курса калаçатăп. Муркашсенче вара эп çынлăх куртăм.

**Л. ИЛЬДЕРКОВА.**

Шупашкар хули.

Официально

### Итоги проведения публичных слушаний по проекту планировки территории д.Эхветкасы Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

17 октября 2014 года прошли публичные слушания по проекту планировки территории д.Эхветкасы Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

На указанном выше публичном слушании было принято следующее решение:

1.Одобрить проект планировки территории д.Эхветкасы Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с учетом замечаний.

# Кил тата хушма хуçалăх



# "Ĕçлесен çимĕç пулать"

Алăра – кĕр пуянлăхĕ



Районти ялсенче хурт-хăмăр йышĕ тата утар хисепĕ чакманни пирĕн енре ку отрасль аталану çулĕнчен юлманнине çирĕплетет. Тĕрлĕ шайрисем малашлăх пысăк предприятисенче теççĕ пулсан та кулленхи пурнăçра пĕчĕк харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем те сумлăрах ĕçлесе пыни курăнать. Вĕсен шутĕнче ялта пурăнакансен килти хушма хуçалăхĕсем те. Практика çакна çирĕплетет: пĕчĕк харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсенче вăй хуракансем кашни пус-тенкĕне, çĕр лаптăкне, тырă пĕрчине шутлани тăтăшах куç умĕнче. Апла пулсан вĕсенче шутламасăр тунă çухатусем те çукпа пĕрех. Вĕсем кунашкал ĕçленине тишкерсен пурнăç аталанăвĕнче пирĕн хушăмăрта чăн-чăн çĕр ĕçченĕсем, хăй ĕçне пĕлекенсем пурри чуна савăнтарать.

Хурт-хăмăр йышĕпе пирĕн район (пур йышши категорисенчи утарçăсен ĕçне те пĕрлештерсе пăхсан) – республикăра малтисен ретĕнче. Çакă пирĕн ума çĕнĕ тĕллевсем лартать, аталану çулĕсем уçать.

Шомик ялĕ Атăл еннелли илемлĕ вырăнта ларни ку тăрăхалла çывхарсен куç тулли курăнать. Ял çыннине пыл хурчĕ ĕрчетмелли меллĕ вырăнтах вырнаçнă тейĕн ăна. Кунта ман шухăшсене Виталий Геннадьевич Ямангеев сăмахĕсем çирĕплетрĕç кăна:

– Вырăнĕ таса. Вăрман пысăк лаптăк йышăнать. Шупашкар та инçех мар. Çавăнпах пулĕ ял ватăлать тенипе килĕшес килмест пирĕн. Кашни кил хуçалăхрах пирĕн ялсем ыранхи кунпа пурăнаççĕ. Вĕсен тăрăшуллă ĕçне пăхсан, ялта ачасен йышĕ хушăннине шутласан урăхла шухăшлаймастăн та. Тĕрĕс каламастăп-и? – икерчĕ турилкки тытнă мăшăрĕ çине тинкерчĕ кил хуçи. Икĕ ача амăшĕ Зинаида Леонидовна упăшки мĕн каланипе килĕшсе пире икерчĕ сĕнчĕ.

Туслă мăшăр 16 çул ĕнтĕ пыл хурчĕпе ĕçлет. Иртнĕ çулсенче вĕсем вĕлле пуçне 55 килограмм пыл илни те пулнă. Кăçал та ĕç кăтартăвĕ начарах пулмарĕ. Çавăнпа та утарçăсен кăмăлĕ те савăнăçлă.

– Шухăшлани пурнăçа кĕрсен çĕнĕ ĕмĕтсем çураласçĕ. Ку вара хамăрăн çемье экономикине вăйлатассипе çыхăннă. Пыл хурчĕсем ĕçленĕ пек тăрăшсан пурнăç уксахламаннине хамăр тĕслĕхре куратпăр, – пĕтĕмлетрĕ калаçăва çемье пуçĕ.

Ял хуçалăхĕнче паян ыранхине пăхса тунă кашни утăм ылтăн пĕрчипех танлашать. Çакна эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Зинаидăпа Виталий Ямангеевсем те хăйсен кулленхи ĕçĕпе çирĕплетсе пыраççĕ. Вĕсен сăмахĕнчен выльăх-чĕрлĕх тупăшлă мар тенипе килĕшменни сисĕнет. Çĕнĕ технологисене вăхăтра алла илни, перекетлĕхе кулленхи ĕçре мала кăларни алă усма памасть вĕсене.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Кĕрхи пахчасенче

# Улма-çырла – пăрпа юр тыткăнĕнче



**Эрне каялла çунă пăрлă çумăра иртнĕ кунсенче юрăн хулăн сийĕ улăштарчĕ. Пахчасенче пуçтарса илеймен улма-çырла вара пăрпа юр тыткăнне лекрĕ. Эсир паянхи сăн ӳкерчĕксенче хура пилеш пăрпа кĕрешнине тата пан улми юр сиввине хирĕç тăнине куратăр.**

**А. БЕЛОВ фотоэтюдĕсем.**



Сĕтелĕ тулăх пултăр

## Тутлă купăста

**3 килограмм купăста, 2–3 кишĕр, 1 пуç ыхра, çур стакан шыв, пĕрер стакан сахăр тата тип çу, 3 кашăк тăвар, 3 кашăк 9 процентлă уксус.**

Туранă купăстана, теркăланă кишĕре тата вĕтетнĕ ыхрана хутăштарса банкăна тултармалла. Шыва сахăр, тăвар, тип çу ярса вĕреме кĕртмелле, çулăма чакармалла та уксус хушмалла. Купăста çине вĕри маринад ярса хупăлчапа витмелле. Сивĕнессе кĕтмелле те холодильника лартмалла, 12 сехетрен купăстана çиме те юрать.

## Фасоль катлечĕ

**1 стакан фасоль, 2 пуç сухан, ыхра шăлĕ, 1 çăмарта, 1 чей кашăкĕ апат соди, пăрăçпа тăвар, тип çу, кишĕр.**

Каçлăха фасоле шӳтерсе хумалла. Ирпе ăна суханпа тата ыхрапа пĕрле аш арманĕпе авăртмалла. Апат соди, пăрăç, тăвар, çăмарта хушса лайăх кăна пăтратмалла. Тип çу ярса хĕртнĕ çатма çине ăна кашăкпа хурса икĕ енчен çавăрса ăшаламалла. Унтан катлетсене кастрюле хумалла, вĕтĕ тураса пăшăхланă кишĕрпе сухан хушмалла. Çур литр шыв ярса 40 минута яхăн пăшăхламалла.

## Хамăрла пĕçернĕ фасоль

**300 грамм фасоль, пуçлă 2 сухан, 1 литр шыв, çур стакан тип çу, пĕрер чей кашăкĕ тăвар тата авăртнă хĕрлĕ пăрăç.**

Фасоле пĕр каç шӳтерсе лартмалла. Унтан пĕçермелле. Шывне уйрăм савăта ямалла. Сухана çурмаункă пек туса турамалла, тип çупа ăшаламалла, ăна тăварпа пăрăç калаттармалла. Тăм чӳлмеке черетлесе фасоль, сухан тултармалла. Çиелти сийĕ фасоль пултăр. Унтан тип çупа фасоль пĕçернĕ шыва ямалла. Духовкăра 40 минута яхăн пĕçермелле. Фасоль салачĕ çав тери тутлă пулать.

## Пан улми икерчи

**3–4 пан улми илмелле, çуса тасатмалла та варрине кăлармалла, теркăпа хырмалла.**

Темиçе çăмартана сахăрпа, ванилинпа тата уксуспа йăвашлатнă апат содипе хутăштармалла. Пурне те пĕрле лайăх пăтратнă хыççăн алланă çăнăх хушмалла. Ытла çăрах мар чуста пултăр. Икерчĕне лайăх хĕртнĕ çатма çинче енчен енне çавăрса ăшаламалла. Çуллă ан тăвăр. Варенипе е хăймапа пĕрле çимелле.

**Т. ИВАНОВА, повар.**

Асра тытăр

**Тĕп сакайĕнче е нӳхрепре ытлашши ăшă пулсан, кишĕр вăхăтсăр сиенленме тата юрăхсăра тухма пултарать. Ку вăл паян асра тытмалли ĕç.**

**А. МЕРЛОВ.**

Пĕлес тенĕччĕ

# Кашнин валлиех хурав пур

***"Кил тата хушма хуçалăх" кăларăма черетлĕ çырусем килчĕç. Хамăрăн хаçатпа туслă çыхăну тытакан ăста кил хуçи арăмĕ Василиса Петровна НИКИТИНА вĕсем çине хурав пама килĕшрĕ.***

## Помидор сĕткенĕ хатĕрлер

**Кăçал помидор ăнса пулчĕ. Каярах пулнисем паян типĕ çĕрте хĕп-хĕрлĕ выртаççĕ. Томат сĕткенне тăварсăр хатĕрлемелли рецепт пур-ши?**

**Виталий ИВАНОВ.**

Çатракасси ял тăрăхĕ.

Томат сĕткенне кашни çын хăйне евĕрлĕ хатĕрлет. Вулавçă вара тăварсăр хатĕрлемелли рецептпа интересленет. Эпĕ унпа темиçе çул усă куратăп ĕнтĕ.

1 литр томат сĕткенĕ кăларма 1,3 килограмм помидор кирлĕ. Ăна валли пĕр пек хитре пиçнĕ, çӳхе хупăллă, çемçе ăшлă помидорсем суйласа илмелле.

Лайăх çуса тасатнă хыççăн туни çыпăçса тăнă вырăна касса илмелле. Çурмалла касса аш арманĕ витĕр кăлармалла. Унтан ăна эмаль кастрюле ярса вĕреме кĕртмелле те тӳрех çулăм çинчен илмелле. Вĕриллех ала витĕр сăрăхтарса кăлармалла: малтан шултра ала витĕр, унтан – вĕтĕ шăтăклинчен. Çакăн хыççăн сĕткене таса эмаль савăта ярса çулăм çине лартмалла. Вĕреме кĕрсен 3 – 5 минут тытмалла (кăпăк тухма пăрахиччен). Унтан хатĕр сĕткене таса банкăсене тултармалла, стерилизациленĕ тимĕр хупăпа витсе "шыв мунчине" стерилизацилеме лартмалла: çур литрлисене 30 минут тытмалла, литрлисене – 40 минут, 3 литрлине – 1 сехет.

Тăварсăррине юратманнисене çакнашкал рецепт сĕнетĕп. Унпа та эпĕ çулленех усă куратăп.

8 – 9 килограмм помидор, 100 грамм сахăр,тутă кĕмелĕх тăвар кирлĕ.

Помидора лайăх çумалла. Тăвата пая пайласа хулăн тĕплĕ пысăк кастрюле ямалла. Çулăм çине лартмалла та хупăлчапа хупласа помидор хуппи ăшлăхĕнчен хăйпăнма пуçличчен пăшăхламалла. Кайран сивĕтмелле, ала витĕр сăрăхтарса кăлармалла. Тăварпа сахăр хушса вĕреме кĕнĕ хыççăн тата 10 – 15 минут пĕçермелле. Хатĕр хутăша стерилизациленĕ банкăсене тултарса хупмалла. Кутăн çавăрса лартса ăшă япалапа витмелле. Сулхăн вырăнта упрамалла.

## Хуран кукли

**Пахчара кабачок та йăтăнчĕ кăçал. Унпа икерчĕ те, рагу та пĕçерсе пăхрăм. Тата мĕн тума пулать-ши унпа?**

**В.ГАВРИЛОВ.**

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.

Ăнса пулнă çимĕçпе темĕн те хатĕрлеме пулать. Ку йăлтах кил хуçи арăмĕн ăсталăхĕнчен килет. Кунта манăн тепĕр сĕнӳ пур. Кабачокпа хуран кукли пĕçерсе пăхăр. Ăна валли пахча çимĕçе теркăпа хырмалла, сĕткенне пăчăртаса кăлармалла. Унтан кабачок хутăшĕ çине тăпăрчă, кăштах манна кĕрпи, çăмарта, нимĕрленĕ пĕр банан ямалла. Пурне те пĕрле аван хутăштармалла. Хыççăн хуран куклисем туса çăнăхпа йăваламалла. Вĕрекен шыва ярса çиеле ишсе тухиччен пĕçермелле.

Ӳкĕнмелле пулмĕ, кукăль çав тери тутлă пулать!

## Ытларах упрама пулать

**Килте кăçал чăхсем нумай усратпăр. Пĕлес килет, вĕсен çăмартине мĕн чухлĕ вăхăт упрама пулать? Çакна валли ăстаçăсем мĕнле майсемпе усă кураççĕ?**

**Надежда ЕРШОВА.**

Вулакана хумхантаракан ыйту нумайăшне паллă. Чылай вăхăт упрамашкăн çĕмĕрĕлмен, таса хупăллă çăмартасене уйăрса илмелле. Вĕсене йăваран илнĕ хыççăн тӳрех сивĕтсен аван. Типĕ, сулхăн (10 градуса çити) çĕрте чăх çăмарти 2–3 эрне чиперех упранать. Холодильникра пулсан вăл 3–4 уйăх та пăсăлмасть.

Тин çеç тунă çăмартана 120 градуса çити вĕрилентернĕ тип çăва 5 çеккунтлăха чиксе кăларсан, ăна 6–8 уйăх упрама пулать.

Çăмартана çавăн пекех салăпа е вазелинпа сĕрни те чылай вăхăт упрама пулăшать.

## Чечексене шăварасси

**Тĕрлĕ чечеке хăйне евĕр шăвармалла тени тĕрĕсех-ши?**

**Т. ТИМУКОВА.**

Пӳрт-çуртра чечек пурри киле хăт кĕртет. Çавăнпа та кил хуçи арăмĕсем чечексемпе туслашнине ырламалла кăна. Вĕсене шăварасси, чăнах та, вара тĕп вырăнта.

Лайăх аталаннă, пысăк савăтра ӳсекен чечеке эрнере пĕрре, пĕчĕк савăтра ӳсеккеннине куллен шăварсан лайăх. Пӳлĕмре мĕн чухлĕ ăшăрах, чечеке çавăн чухлĕ час-час шăвармалла. Çуркуннепе çуллахи вăхăтра чечексене нумайрах шăварма сĕнеççĕ, хĕлле вара сулхăнрах пулнине шута илсе сайрарах шăварас пулать.

Чечексемшĕн çумăр, юр шывĕ питĕ усăллă. Çавăн пекех "типĕлле шăвармалли" меслет те пур – чӳлмекри тăпрана пĕрмаях кăпкалатса тăмалла.

